Раççей – пирĕн Тăван çĕршыв

# ПАТРИОТ

Январĕн 27-мĕшĕ – Ленинград блокадине татнă кун

## Çири кĕперен çывăхрахчĕ вилĕм

Москакасси ялĕнчи Советская урамри 8-мĕш çурт. Урамри тата кил хушшинчи тирпейлĕхе пăхсан, кунта Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин участникĕсен çемйи пурăнать тесех калаймăн. Тирпейлĕх



çенĕк картлашкисенчен пуçланса пÿртри пÿлĕмсенче те хуçаланать. Петр Иванович Живойкинпа Пелагея Васильевна Анатольева 60 çул ĕнтĕ туслă çемьепе пурăнаççĕ. Кăçал вĕсен – бриллиант туй. Икĕ хĕр ÿстернĕ вĕсем, аслă пĕлÿ панă, çемьесем çавăрма пулăшнă. Виçĕ мăнук илемне курма тÿр килнĕскерсем паян 2 прамăнук сассипе савăнаççĕ. Ку вăл паян...

### ВĂРÇĂ ПУÇЛАНЧĔ

– Вăрçă пуласса никам та кĕтмен. Анчах 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнчи уяр та ăшă кун кăнтăр тĕлне Ленинградри радиопа та, пĕтĕм Совет Союзĕнчи пекех, фашистла Германи пирĕн çĕршыв çине вăрă-хурахла тапăнса вăрçă пуçлани пирки пĕлтерсен, манăн чĕрере темĕн тапранчĕ, канăçлăх çĕтрĕ. Урамра хĕвел пăхатчĕ. Чунра вара пусăрăнчăкчĕ. Атте Ленинград çумĕнчи колхоз председателĕччĕ те пĕрремĕш кунранах ĕçсене йăлтах фронта валли тесе йĕркелеме тăрăшатчĕ. Малтанхи кунсенчех аслă пиччесем иккĕн (эпир çемьере 6 ача пулнă) фронта тухса кайрĕç, – йывăррăн пулин те, аса илĕве ума кăлармa пуçларĕ çав çулах Ленинград блокадине лекнĕ, унти терт-нушана хăй çинче чăтса ирттернĕ Пăлаки кинемей.

Ленинград Аслă вăрçăн пĕрремĕш кунĕсенчех тăшмана кĕтме хатĕрленнĕ. Çавна валли хулари çамрăксем, фронта кайманнисем, Ленинград хули патнелле çывхаракан тăшмансен куçĕ умĕнчех, вĕсен пульлисемпе снаряд-бомба ванчăкĕсем айĕнчех, хамăр салтаксем валли окопсемпе траншейăсем чавнă.

### БЛОКАДА

– Ленинграда çăкăр туянма тата çăкăр карточкисем илме çеç каяттăмăр. Анчах унта та бомбежка айне пулаттăмăр. Кашни утăмрах сыхă пулмаллаччĕ. Фугаслă бомбăсене, тухнă пушарсене сÿнтерессипе пирĕн ĕçчĕ. Кунпа пĕрлех, тăшман самолечĕсем кайсан, çуртсенчен çын виллисене урама, пуçтаракан машинăсем патне илсе тухаттăмăр. Çÿлерехри этажсенчен çунашкапа сĕтĕрсе анаттăмăрччĕ вĕсене, – блокадăн пĕрремĕш кунĕсене аса илчĕ ветеран.

Çакнашкал йывăрлăхсене чăтнипе пĕрлех Ленинград блокадине лекнисем талăксерен 125 грамм çăкăр илни тата ăна татăксем туса типĕтсе çини паян та ветеран куçне шывлантарать. Çăмăл-и-ха 125 грамм çăкăр карточкишĕн вилнĕ пĕчĕк ачисене амăшĕсем чÿрече умне шăнтса лартни. Куççульсĕр епле аса илĕн-ха çăкăр илме пĕчĕк ачипе пынă хĕрарăмсем вĕсене хăйсен çăкăр патне кĕмелли черечĕ çитсен самантлăха урамри сĕтел çине хурса хăварнă хыççăн вĕсене выçăпа аптăракансем вăрласа кайнине. Мĕн чухлĕ хуйхă! Çаксене аса илсен Пелагея Васильевна куççульне шăлса самантлăха калаçма чарăнчĕ.

– Аттепе аннене те çак йывăр çулсенче çухатрăмăр. Атте пĕррехинче пирĕн самолет ÿкнине, летчикĕ парашютпа сикнине курать те ăна шырама-пулăшма вăрмана каять. Тупать хайхискерне вăл. Апат-çимĕç леçме вара, нимĕççем асăрхамĕç тесе, 12 çулхи кĕçĕн йăмăка ярать. Вăл унта çитнĕ тĕле фашистсем ăна кĕтнĕ те ĕнтĕ. Темĕнле ыйтсан та йăмăк хăй кам ачине каламан. Вара ăна яла илсе пырса ял çыннисене кăтартнă. Аттесем пурăннă вырăнтан инçех мар пурăннă пĕр çын сутнă вара ăна. Кайран колхозниксем атте виллине ял тулашĕнче тупнă, – йывăррăн аса илет Пăлаки кинемей.

Хăйсене блокадăран илсе тухни те хĕрĕн чĕринче ĕмĕрлĕхех юлнă. Ăçтан манăн-ха умра пыракан машина ачасемпе тата амăшĕсемпе пĕрле пăр айне анса кайнине, ирĕкеллерех тухсан нумайăшĕ апат нумай çинипе кÿпĕнсе кайса вилнине, кайран хĕвел тухăçнелле выльăх турттармалли эшелонпа илсе тухнă чух нимĕççен пульлисем поезд çинчех вуншар-çĕршер çын пурнăçне татнине.

### ЧĂВАШ ЕН

Пелагея Васильевна Анатольева хăйĕн хĕр тантăшĕпе тухнă эшелонпа Кавказа каяс вырăнне Чăваш Республикинчи Çĕмĕрле хулине лекет. Çакăнтан пуçланать Ленинград хĕрĕн Чăваш Енри пурнăçĕ.

– Ленинградран инçе тартăмăр пулсан та, вăрçă терчĕнуши вĕçленмерĕ-ха. Малтанах поезд çинче силленсе килнĕ йывăр хĕрарăм пулнă хĕр тантăшăм Наташа ача çуратмалли больницăна лекрĕ. Унăн тепĕр икĕ çулхи ачине пăхасси çав вăхăтра ман çинче пулчĕ. Çăкăр карточкисем илесси, ача пăхасси тата тăтăшах больницăна тантăшăм патне çÿресси çăмăл марччĕ. Ĕççĕр те ларман. Пăрахутсем çÿреме пуçласан Етĕрнене антăмăр та Палтай ялĕнче чарăнтăмăр. Тĕрлĕ вăхăтсенче тĕрмере ларакансем дамба тунине тата вĕсен ĕç хатĕрĕсене сыхлассипе, сыр заводĕнче ĕçлессипе, çĕр улми тураса типĕтессипе тимлерĕмĕр. Чăваш Республики хăйне евĕр хитреччĕ, кунти хĕрарăмсем ĕçченччĕ, – пирĕн республикăпа паллашнă малтанхи кунсене аса илчĕ ветеран.

Вăрçă хыççăн фронтран таврăнса ачасене пĕлÿ парас ĕçе кÿлĕннĕ Петр Иванович Живойкинпа Палтайра паллашса пĕр чĕлхе тупса 1950 çулта çемье çавăраççĕ. Пурăнакиле вăрçă вăхăтĕнче хурашурне пайтах курнăскерсем Петр Ивановичăн тăван ялне – Москакассине – куçса килсе тĕпленеççĕ. Çавăнтанпа Ленинград хĕрĕ, ĕнерхи блокадница П.В. Анатольева – пирĕн ентеш. Кăçал 93 çул тултаракан П.И. Живойкинпа ирттернĕ пирĕн калаçу та çывăх вăхăтрах хаçат страницинче пичетленĕ.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ÿкерчĕкĕ.**

### Пирĕн маяксем

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШŮЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧИ ĔНЕ СĂВАКАНСЕМ 2009 ÇУЛТА ХĂЙСЕМ ПĂХАКАН КАШНИ ĔНЕРЕН МĔН ЧУХЛĔ СĔТ СУСА ИЛНИНЕ КĂТАРТНИ (килогрампа)**

**Колонкăсенче: 1. Дояркăсем. 2. Хуçалăхсем. 3. Пĕлтĕр сунă. 4.Виçĕм çулхи кăтарту.**

| | | | |
|---|---|---|---|
| Михайлова Н. В. | Суворов яч. хис. | 6485 | 4816 |
| Орлова Н. Н. | Суворов яч. хис. | 6485 | 4838 |
| Андреева З. С. | «Ударник» | 6011 | 5968 |
| Анисимова С. В. | «Свобода» | 5745 | 4158 |
| Ковалева Г. П. | «Оринино» | 5399 | 4977 |
| Васильева З. Н. | «Оринино» | 5399 | 4977 |
| Алексеева Л. П. | «Ударник» | 5384 | 4950 |
| Иванова З. Г. | «Ударник» | 5384 | 4950 |
| Кириллова Е. А. | «Свобода» | 5264 | 4727 |
| Васильева Л. И. | «Ударник» | 5204 | 5343 |
| Хмелева З. В. | «Ударник» | 5204 | 5343 |
| Петрова М. Г. | «Свобода» | 5127 | 4068 |
| Майорова М. И. | «Свобода» | 5068 | 4343 |
| Журавлева Н. Е. | Суворов яч. хис. | 5045 | 4868 |
| Антонова Ф. Ю. | Суворов яч. хис. | 5045 | 4868 |
| Иванова Г. А. | Суворов яч. хис. | 5016 | 5036 |
| Филиппова Т. Н. | Суворов яч. хис. | 5016 | 5036 |
| Макарова В. В. | Суворов яч. хис. | 5016 | 4838 |
| Печкова В. Н. | Суворов яч. хис. | 5015 | 4816 |
| Иванова Ю. А. | Ильич яч. хис. | 4879 | 4218 |
| Трофимова В. Г. | «Ударник» | 4875 | 4300 |
| Иванова И. А. | «Оринино» | 4867 | 4462 |
| Кожевникова Н. В. | «Оринино» | 4867 | 4462 |
| Андреева Л. А. | «Герой» | 4842 | 5216 |
| Сорокина Л. М. | «Герой» | 4830 | 4008 |
| Алексеева Н. Г. | «Ударник» | 4825 | 5108 |
| Алексеева В. Ф. | «Ударник» | 4825 | 5108 |
| Васильева Е. В. | «Герой» | 4803 | 5383 |
| Борисова Н. М. | «Герой» | 4803 | 5499 |
| Васильева Э. В. | «Оринино» | 4731 | 4234 |
| Уткина С. В. | «Оринино» | 4731 | 4234 |
| Семенова З. М. | Ильич яч. хис. | 4681 | 4422 |
| Федорова Г. Г. | Ильич яч. хис. | 4627 | 4577 |
| Терентьева Р. А. | Ильич яч. хис. | 4566 | 4577 |
| Федорова С. Л. | Ильич яч. хис. | 4546 | 4577 |
| Михайлова З. И. | «Ударник» | 4410 | 4390 |
| Петрова Л. К. | Ильич яч. хис. | 4364 | 4577 |
| Сергеева В. А. | «Ударник» | 4351 | 4077 |
| Сергеев В. И. | «Ударник» | 4351 | 4077 |
| Алексеева Е. М. | «Ударник» | 4348 | 3773 |
| Платонова Г. Ю. | Ильич яч. хис. | 4341 | 4596 |
| Смирнова Е. А. | «Оринино» | 4316 | 4234 |
| Казамбаев А. А. | «Оринино» | 4316 | 3910 |
| Терентьева Э. П. | Ильич яч. хис. | 4314 | 4586 |
| Клементьева Л. А. | Ильич яч. хис. | 4314 | 4586 |
| Тимофеева Т. В. | Чкалов яч. хис. | 4186 | 3520 |
| Федорова Ю. П. | «Свобода» | 4043 | 3838 |
| Иванова В. В. | «Ударник» | 4071 | 3789 |
| Иванова Е. Н. | «Ударник» | 4071 | 3789 |
| Смирнова Л. И. | «Свобода» | 3975 | 3806 |
| Лата А. И. | «Свобода» | 3960 | 3862 |
| Семенова Н. Ю. | «Свобода» | 3927 | 4394 |

### «Рябинушка» ача сачĕ 30 çулта

## Ял малашлăхне пĕрле пăхатпăр

Пирĕн яла пырса кĕрсенех вĕрентÿпе культура центрĕ курăнать. Вăл – Юнкă ен илемĕ. Шкултан инçех те мар вырнаçнă икĕ хутлă çуртра ялти ача сачĕ вырнаçнă. Иртнĕ çулхи раштавăн 25-мĕшĕнче вăл – «Рябинушка» ача сачĕ – 30 çул тултарчĕ. Палăртма кăмăллă, ачасем валли уçнă çак учреждени хăйнешкеллисем хушшинче районта пиллĕкмĕш. Çăмăл

Ача сачĕ 30 çул тултарнă çул кунти воспитательсем 30 ачана шкулти партăсем хушшине ăсатрĕç. 30 çул, 30 ача... Кун пекки ятарласа шутласан та пулас çук. Анчах пирĕн тĕле çак телей килчĕ. Кунашкал пысăк выпуск хальлĕхе пулманччĕ-ха. Апла пулсан ял пурăнать, малалла аталанать.

Паян пирĕн ача садне Кăпасран, Юнкăпа Юнкăпуçĕнмарри – пирĕн паянхи тĕллев.

Ача сачĕ тирпейлĕхпе те, ачасен сывлăхне пăхассипе те, халăхăмăр культурине çÿлте тытса пырассипе те палăрса тăрать. Çапла вара ашшĕ-амăшĕсемпе тĕрлĕ спорт мероприятийĕсем ирттерессè, çулленех çăварни чупасси, районта ирттерекен конкурссене хутшăнасси, ачасене çĕр ĕçне хăнăхтарасси, паян садике çеç çÿрекен ача-



«Рябинушка» ача садне аталану çулĕпе илсе пыракан паянхи коллектив.

пулман ăна хута ярасси. Анчах тăван ен аталанăвĕшĕн тăрăшакан, малашлăха пăхакан ял çыннисемпе çак ĕçе кÿлĕннĕ пуçлăхсемшĕн ял халăхĕшĕн тунă çак пархатарлă ĕçĕн хăйĕн пĕлтерĕшĕ пулнă. Вăл ял ыранхи куна пăхса пурăннине пĕлтернĕ.

«Новая Юнга» колхоз заказĕпе Н. Гусак ертсе пыракан «Моргаушская» строительство организацийĕ тунă çурт паян пилешсемпе хыр-чăрăшсен ытамĕнче яла хăт кĕртсе ларать, кулленех ачасене хăй патне йыхăрать.

чен, Пĕрремĕш Май выççăлккинчен, Çармăçкассинчен 70 ача çÿрет. Вĕсем 4 ушкăнра малалла аталанаççĕ. Вĕсене пĕлÿ çулĕ çинчи пĕрремĕш утăмсене тума ăста воспитательсемпе вĕсен пулăшаканĕсем вĕрентеççĕ. Т. Яргунькина ача сачĕн пĕрремĕш кунĕнченпех çак ĕçре. Н. Салдакеева та унран нумаях юлмасть. Ыттисен стажĕсем те пысăк. Ача садне тĕрлĕ çулсенче В. Бархаткина, Л. Илугина, И. Ильина ертсе пынă, ÿсĕм çулне туптанă. Вĕсен тăрăшулăхне харама ярас сене пушар хăрушсăрлăх правилисемпе паллаштарасси – пирĕн кулленхи ĕçсен шăнăрĕ. Вĕсене пурнăçласа эпир Юнкăри вăтам шкулпа та тачă çыхăну тытатпăр: ачасене пĕчĕккĕн шкул пурнăçне хăнăхтаратпăр. Кунсăр пуçне Культура çуртĕнчи тĕслĕх библиотека та – пире ялан кĕтекен вырăн. Унта ирттернĕ юмах сехечĕсем, ăслăлăх саманчĕсем – ачасемшĕн ялан кĕтнĕ мероприятисем.

**Е. МИХАЙЛОВА,**
**ача сачĕн заведующийĕ.**

### Выльăх-чĕрлĕх пăхакансем – ят-сума тивĕç çынсем



*«Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕ – районта тăнăç аталанса пыракан ял хуçалăх предприятийĕсенчен пĕри. Хуçалăхра сĕт сăвасси те сумлă утăмсемпе пырать. Акă иртнĕ çул хуçалăхри сĕт сăвакансем кашни ĕне пуçне тивекен вăтам сăвăма унчченхи çулхинчен 500 килограма яхăн ÿстерчĕç. Р. Блинова ертсе пыракан Патаккассинчи ферма коллективĕ пĕр ĕне пуçне вăтамран 4826 килограмм сĕт суса илчĕ. Ку вăл районти лайăх кăтартусенчен пĕри. Паянхи сăн ÿкерчĕкре эсир пĕлтĕр çак ÿсĕме тăвассипе ĕçленĕ дояркăсен пĕр ушкăнне куратăр.*

**А. БЕЛОВ сăн ÿкерчĕкĕ.**

### Маттурсем

## Вăхăтра пулăшрĕç

Кăрлач уйăхĕн 24-мĕшĕнче районти пушар хуралĕн ĕçченĕсем маншăн чи çывăх юлташсем вырăннех килсе тухрĕç. Çак пулăшуçăсен ĕçĕ вĕçĕмех ăнса пытăрччĕ, вĕсен ячĕ район çыннисем хушшинче ырăпа çеç палăртăрччĕ. Пушар хуралĕнче çĕрне-кунне пĕлмесĕр вăй хуракансене çапла тав туса калаçма манăн паян сăлтавĕ те пур.

«Ÿкессе пĕлнĕ пулсан тÿшек сараттăм», – шахвăртать халăх сăмахлăхĕ, анчах... Асăннă кун 11 сехет те 20 минутра мунча патĕнчен тĕтĕм тухнине асăрхарăмăр. Алăка уçрăмăр та хирĕç çулăм палкаса тухрĕ. Алăка хупса Муркашри 37-мĕш пушар чаçĕн Мăн Сĕнтĕрти уйрăмĕн постне шăнкăравларăмăр. Дежурствăра тăнă Владимир Кольцов водительпе Алексей Кириллов пушарнăй Çĕн Шоккăна кĕске вăхăтрах çитрĕç. Оперативлă ĕçленипе Муркашран тĕп вăйсем çитиччен çак арçынсем «хĕрлĕ автана» çăварлăхларĕç. Пулăшу вăхăтра çитнипе пирĕн хуçалăх пысăк инкекрен çăлăнса юлчĕ. Мунча умĕнчен инçе саралайман çулăм пире пысăк тăкаках тăваймарĕ.

Тайма пуç сире, пушар хуралĕн ĕçченĕсем!

**З. СТЕПАНОВА.**

Çĕн Шоккăн ялĕ.